# Усравкка

*Калав*

Таҫтан килнĕ тăватă ют ҫын кӳршĕсем патĕнче тĕрмешнине Алеша урамра сăнаса тăрать. Хуҫисем пурăнма тахҫанах хулана куҫса кайнă. Пӳрчĕ миҫе ҫул ĕнтĕ пушах ларать. Халĕ акă палламан арҫынсем ăна салатса таҫта илсе каяҫҫĕ. Малтан вĕсем хăмасемпе хĕреслесе ҫапнă чӳречесене уҫрĕҫ, кантăкĕсене кăлара-калара илчĕҫ, халĕ авă пӳрт тăррине витнĕ тимĕр листисене сӳме пуҫларĕҫ.

— Эй, ачам, кил-ха кунта! — кăчăк туртса чĕнчĕ Алешăна арҫынсенчен пĕри, ҫӳлте тăраканни. — Ме-ха, тыт, — терĕ вăл. Чĕркуҫленсе ларчĕ те мĕнпур кĕлеткипе аялалла ӳпĕнсе чупса пынă Алеша енне аллине тăсрĕ. Ывăҫĕнче темскер, чĕрĕскер, йăшăлтатать.

— Тыт, ан хăра. Кăвакарчăн чĕппи вăл.

Чăнах та, кайăк чĕппи иккен, анчах шутсăр имшерскер. Тĕкĕ ҫук, ӳчĕ пĕркеленчĕк, те хĕрлĕ, те кăвак темелле ăна. Ҫапах алăра йăшăлтатать хăй.

— Пичче, мĕн тумалла ман унпа? — пуҫне каҫăртса ыйтрĕ ҫакăн пек парне кĕтмен ача.

— Усра, ҫитĕнтер.

Алеша мĕнле ҫитĕнтермеллине ыйтса пĕлесшĕнччĕ, анчах арҫын тек калаҫса тăмарĕ, ҫаврăнчĕ те мăлатукĕпе тем шаккама тытăнчĕ.

Йĕкĕр ывăҫĕнче вăйсăррăн хускалакан пĕчĕк ăша чăмаккана Алеша килне илсе таврăнчĕ, картишне ячĕ. Мĕн тумалла ĕнтĕ халĕ унпа? «Хырăмĕ те выҫă пулĕ, анчах мĕн ҫитермелле? Анне кĕҫех ĕҫрен килмелле-ха. Вăл пĕлетех», — шухăшларĕ ача. Лăпланса вăл каллех пĕчĕк чĕпĕ умне пĕшкĕнчĕ. Ытла та имшеркке ҫав, хальлĕхе

йёркеллӗ утма та пултараймасть. Авӑ каллех тӑрӑнса кайрӗ шеремет.

— Эсӗ ан хӑра, ан тар манран. Эпӗ кӳрентерместӗп сана, — мӑкӑртатрӗ вӑл. — Пирӗн патра ӳсӗн. Ҫунаттусем ҫирӗпленеҫҫӗ акӑ, вара пӑр-р вӗҫетӗн те каятан ӑҫта кирлӗ унта. Эпӗ чармастӑп. Яту ҫук-и-ха санӑн? Апла пулсан, — ача кӗске самант шухӑшласа тӑчӗ, — апла пулсан... Кӑвик пул. Юрать-и?

Ӑнсӑртран Алеша ӳпле умӗнче хускалмасӑр выртакан Караҫ ҫине пӑхса илчӗ. Темшӗн-ҫке кайӑк чӗппи ҫине тӗлленӗ тӑватӑураллӑ тусӗн куҫӗсем килӗшмерӗҫ ӑна. Акӑ йытӑ сӑнчӑрне чанкӑртаттарса илчӗ, васкамасӑр утса пычӗ те Кӑвик ҫинчен куҫне вӗҫертмесӗр сиввӗн хӑрлатса ячӗ.

— Караҫ, — терӗ Алеша ӑна пӳрнипе хаяррӑн юнаса. — Юрамасть Кӑвике тивме! Илтетӗн-и? Юра-масть!

Хӑйпе ҫапла сиввӗн калаҫнӑшӑн кӳреннӗ Караҫ пуҫне аяккалла пӑрчӗ. «Юрамасть пулсан юрамасть пултӑр. Ухмах мар, кӑшкӑрмасӑрах ӑнланатӑп», — терӗ унӑн ӳпкелекен пичӗ-куҫӗ. Йытӑ парӑнчӗ, ҫавӑрӑнчӗ те хӑйӗн малтанхи вырӑнне кайса выртрӗ.

Ҫапах йӑлӑхтарать картишӗнче вӗҫӗмсӗр пӗччен ларма. Темшӗн-ҫке амӑшӗ те халиччен ӗҫрен килмерӗ. Йӗкӗреш ҫуралнӑ Нюшка пур-ха. Урамран чупса кӗрсе Кӑвик ҫине пӗр хушӑ аякран пӑхса тӑчӗ вӑл, анчах Алеша кӑштах ларха тесенех вӗлт саврӑнчӗ те тухса сирпӗнчӗ. «Юрӗ, эпӗ те кирлӗ пулӑп-ха. Аса илтерӗп ун чух паянхине», — ӑшӗнче кӳренсе шухӑшларӗ ача яркӑн тӑванӗ ҫинчен...

Ах, ытла та тунсӑх-ҫке картишӗнче пӗччен ларма.

— Караç, вӑрҫатӑн-и мана паҫӑр кӑшкӑрнӑшӑн? — пырса ларчӗ Алеша тусӗ патне. — Ан ҫиллен. Юрать-и? Эпӗ юрататӑп сана.

Йытӑ каҫарнине пӗлтерсе ӑна питӗнчен ҫуласа илчӗ.

Ҫав самантра пӳрт тӑррине темиҫе кӑвакарчӑн пырса ларчӗ. Унтан вӗсенчен иккӗшӗ картиш варринче хускалмасар ларакан пӗчӗк чӗпӗ патне вӗҫсе анчӗҫ.

— Караç, шӑп вырт, ан хускал, — пӑшӑлтатрӗ Алеша тусне мӑйӗнчен ыталаса. — Кусем пирӗн Кӑвикӗн ашшӗпе амашӗ пулас...

Ӑслӑ йытӑ, ӑнланатӑп сана тенӗн, хуллен нӑйкӑшса илчӗ ҫеç. Вӗҫсе аннӑ кайӑксем йӗри-тавра асӑрханullӑн пӑхса илчӗҫ. Чӗппи вӑйсӑр урисемпе тайкалана-тайкалана утса пырсан вӗсенчен пӗри пуҫне ун енне пӗкрӗ те ҫӑварне карчӗ. Вара — акӑ тӗлӗнтермӗш! — Кӑвик пӗр тӑхтамасӑр сӑмсине карнӑ ҫӑвара чиксе ячӗ, тӗрткелешрӗ, турткалашрӗ, пӗр ури ҫинчен теприн ҫине пускаласа тапӑлтаткаларӗ, юлашкинчен тӑсӑлакан шурӑ шӗвеке сӑмси тӑрӑх юхтарса пуҫне ирӗке каларчӗ. Каярахпа пӗлчӗ Алеша: кӑвакарчӑнсен пӗчӗк чӗппisene ҫитермелли апачӗ пӗсехере иккен. Шурӑ тӗслӗ пулнӑран-ши, ӑна кӑвакарчӑн сӗчӗ теҫҫӗ.

Хырӑмне тӑрантарсан Кӑвик пӗчӗк чӑмаркка пулса хутланса ларчӗ, тӗлӗрсе кайрӗ пулас, хускалмарӗ. Алеша сарайӗнчен машина илсе тухрӗ, пӗчӗк кӗреҫепе ӑса-ӑса пикенсех хайӑр тиеме тытӑннӑччӗ, сасартӑк кӗтмен харушлӑх сиксе тухрӗ.

Пахча енчи лутра сарай ҫинче Мӑруш кушак курӑнчӗ. Ҫивӗч куҫӗпе картишӗнче мӗн пурри-ҫуккине хӑвӑрт пӑхса ҫавӑрӑнчӗ те хутланса ларакан кӑвакарчӑн чӗппине курах кайрӗ. Мӑруш пӗр тӑхтамасӑр малтан ҫывӑхри вутӑ шаршанӗ ҫине ҫӑмӑллӑн сиксе анчӗ, унтан — кил картине.

Тăвată ури çине лăпчăнчĕ те симĕс кусне ялтăртаттарса Кăвик патне хуллен, шăппăн йăпшăнса пыма пуçларĕ.

— Хав! — хаярран янрарĕ силлес сасă. — Хав! Ан тĕкĕннĕ пултар!

Лекетчĕ-ха çăткăн вăрă-хураха, анчах Мăруша Караç сăнчăрĕ кĕскерех пулни çăлчĕ. Çакна кĕтмен кушак каялла сикрĕ, сурăмне пĕкĕ пек аврĕ, хӳрине юпа пек тăратрĕ, йытă енне сивĕч шăлĕсене хăрушшăн йĕрсе, хаяррăн чашлатса ячĕ.

— Х-х-х!.. Сана мĕн ĕç пур кăвакарчăн чĕппипе? — терĕ пулас вăл.

Анчах тивме хăяймарĕ. Алеша чупса пынине курсан пӳрт айнелле вирхĕнчĕ çеçс.

Савăннă ача каллех тусне пырса ыталарĕ.

— Мĕнле маттур эсĕ, Караç! Тавтапуç сана! Унсăрăн йăтса таратчĕ вĕт çăткăн Мăруш пирĕн Кăвике.

Унтан ача пуçне телейлĕ шухăш пырса кĕчĕ.

— Караç, эпĕ халĕ урама каятап. Мана унта юлташсем кĕтеççĕ. Сыхла эсĕ Кăвике, никама та кӳрентерме ан пар. Уншăн эпĕ сана каçхине какайпа хăналап. Аннерен ыйтатăп çеç. Вăл лайăх, ырă кăмăллă. Сана юрататъ.

Урамра выляна чух та Алеша кил картинче юлнă имшеркке, хӳтĕсĕр кайăк чĕппи çинчен манмарĕ. «Караç тивмерĕ-ши ăна?» — темиçе хутчен те пыра-пыра кĕчĕ пуçа шиклĕ шухăш. Çук, сывах, чиперех ларать. Ĕнтĕ Кăвикшĕн шикленме кирлĕ мар. Мăруш тек çывăха пыма та хаяймĕ ун патне. Мĕншĕн тесен халĕ ăна Каруç хураллать.

Каç пуласпа кăвакарчăн ушкăне каллех пӳрт тăррине пырса ларчĕ, иккĕшĕ каллех картишне вĕççе анса чĕппине тăрантарчĕс. Пĕри ситерет, тепри тимлĕн йĕри-тавра пăхса тăрать. Хураллать ĕнтĕ юлташне тĕрлĕ харушлăхран. Çук, ахалех иккĕленчĕ Алеша Караç пирки. Йытă Кăвике те тивмерĕ, çывăхах вĕççе анакан кăвакарчăнсене те

хăратмарĕ. Хĕвел анса çанталăк сулхаăнлатсан çара ӳтлĕ Кăвик хăех Караç еннелле тĕнкĕлтетрĕ. Темле майпа сисрĕ вăл ун патĕнче ăша тупасса. Çывхарчĕ те пуçĕпе çемсе лапсăркка çăмлă кĕлеткене перĕнчĕ. Караç та ăнланчĕ ăна, ачашшăн çуласа илчĕ те çывăхах куçса выртрĕ.

— Усрава илнĕ вăл ăна. Ӳплере юнашарах выртаççĕ, — илтрĕ Алеша ирхине ашшĕн хаваслă сассине. Ашшĕпе амăшĕ кам çинчен каланине ача ăнланчĕ, кулса ячĕ те каллех тутлă ыйха путрĕ.

Çапла ӳсрĕ Кăвик. Кăвакарчăнсем чылай вăхăт пĕчĕк чĕппине кашни кунах пыра-пыра тăрантарчĕç. Çынсем те, пысăк йытă та пĕчĕк чĕппе кӳрентерменнине курчĕç пулин те асăрхануллă кайăксем вĕсене нихăçан та хăйсен çывăхне ямастчĕç. Яланхи пекех, вĕсем ушкăнпа вĕççе пыраççĕ, картишне иккĕн анаççĕ. Пĕри тăрантарать, тепри ăна хураллать.

Ĕнтĕ Кăвикĕн илемсĕр çара ӳчĕ малтан çемсе мамăкпа, унтан чăн-чăн тĕкпе витĕнчĕ, урисем çирĕпленчĕç. Суртсем çине час-часах пырса ларакан кăвакарчăнсем кил картине анма пăрахрĕс. Кăвик килти чăх-чĕппе сапса панă тырă-пулла сăха-сăха çиме пуçларĕ. Уйăх иртрĕ-и, иртмерĕ-и, пĕр хĕвеллĕ çутă ир усравкка кайăк çуначĕсене сарчĕ те вăр-р çĕкленсе пӳрт тăрринче ларакан юлташĕсен ушкăнне вĕççе хăпарчĕ. Тӳрех пăрахса каймарĕ вăл хăй ӳснĕ картиша. Пĕр-икĕ хут анчĕ, чăхсемпе те апат çирĕ, Караç çывăхне те пыра-пыра ларчĕ.

Çапла икĕ-виçĕ кун иртрĕ. Унтан Алеша ăна куçран çухатрĕ. Темле тилмĕрсе пăхсан та çывăхри кăвакарчăнсем хушшинче вăл хăйĕн усравккине паллаймарĕ, темле ачашшăн чĕнсен те Кăвик ушкăнран уйăрăлса тек картишне анмарĕ. Йытă хуллен нăйкашнине илтсен çеç вăл вĕççе килнĕ кайăк ушкăнĕнче Кăвик та пуррине ăнланса

илетчĕ. Каярахпа Караç та пĕчĕк тусне чĕнме пăрахрĕ, вăл та паллайми пулчĕ пулас.

*Нестерова, З. Усравкка : [калав] / З. Нестерова // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 197-198.*